27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
18
ЫТЛАРИКУН,
77(6572) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЕРЕМЕНКĂНА

ПРИМОРСКИ Уйрăм Армин ҫарĕсем, наступлени вăйлатса пырса, ЯЛТА хулипе Хура тинĕс ҫинчи порта — тăшман оборонин Крымăн кăнтăр ҫыранĕнчи тĕреклетнĕ пункчĕсенчен пĕрне — туртса илнĕ.

ЯЛТĂНА туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-майорăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн, КОЛДУБОВ генерал-майорĕн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ полковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-майорĕн СОКОЛЬСКИН артиллерисчĕсем тата инженерла ҫарсен генерал-майорĕн ПИЛИПЕЦĂН саперĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕҫсен тĕрĕсне ырлама палăртса хăварас шутпа, ЯЛТĂНА ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсĕсене «ЯЛТИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 16-мĕшĕнче, 20 сехетре, пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, ҫĕр ҫирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ЯЛТĂНА туртса илнĕ ПРИМОРСКИ Уйрăм Армин паттăр ҫарĕсене Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ЯЛТĂНА ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи апрелĕн 16-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Паян, апрелĕн 17-мĕшĕнче, 18 сехетре, Киев хулинче Украинăри 1-мĕш фронтăн командующийĕ пулнă Арми генералне ВАТУТИНА пытараҫҫĕ.

Совет Союзĕн ҫарĕпе флочĕ хăйсен боевой ялавĕсене ВАТУТИН тупăкĕ умĕнче таяҫҫĕ, Хĕрлĕ Ҫарăн чи лайăх полководецĕсенчен пĕрне хисеп тăваҫҫĕ.

ҪАПЛА ХУШАТĂП: Арми генералне ВАТУТИНА пытарнă сехетре ăна юлашки хут чыс тумалла, пирĕн Тăван ҫĕршывăн столицинче МУСКАВРА ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм тăватă хут пĕр харăс персе салют памалла.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи апрелĕн 17-мĕшĕ.

НИКИТА СЕРГЕЕВИЧ ХРУЩЕВ ЮЛТАША

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Эсир ҫурални 50 ҫул тултарнă кун Сире — Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлне, партипе Совет государствин питĕ паллă деятельне, Совет Украинн правительствин пуҫлăхне тата Украинăри большевиксен руководительне — хĕрӳллĕн саламлаҫҫĕ.

Хаклă Никита Сергеевич, Эпир Сире нумай ҫулсем хушши сывă пурăнма тата хамăр Тăван ҫĕршыври халăхсен ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн кĕрешнĕ ҫĕрте малалла ҫитĕнӳсем туса пыма сунатпăр.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ
СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Н. С. Хрущев юлташа Ленин орденĕпе наградăласси ҫинчен

Н. С. Хрущев юлташ ҫурални 50 ҫул тултарнă май, вăл партипе совет халăхĕ умĕнче калама ҫук пысăк ĕҫсем тунине шута илсе, Никита Сергеевич Хрущев юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи апрелĕн 16-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА:

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем урамсенче вăйлă ҫапăҫнă хыҫҫăн Украинăн область центрне ТАРНОПОЛЬ хулине пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ. ТАРНОПОЛЬ вăл пысăк чугун ҫул узелĕ тата нимĕҫсен Львов хули енчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулнă. ТАРНОПОЛЬ хулинче ҫавăрса илнĕ нимĕҫсен гарнизонĕ тăвата пехотнăй дивизийĕн тата чылай уйрăм чаҫсен юлашкийĕсенчен тăнă, унта мĕн пурĕ 16.000 ҫын пулнă. Ҫав гарнизона, тыткăна парăннă 2.400 нимĕҫ салтакĕпе офицерĕсĕр пуҫне, пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Ҫакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем — 35, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 85, минометсем — 125, пулеметсем — 400 яхăн, автомашинăсем — 350, паровозсем —5, вагонсем—285, тĕрлĕ складсем — 6.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем ЧЕРТКОВ хулинчен хĕвеланăҫнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре ҫаплах малалла тапăнса пынă, темиҫе ял туртса илнĕ, вăл шутра—ДЖУРЫН, ПОЛОВЦЕ, ПАУШУВКА, БАЗАР, ЯКУБОВКА.

СЕВАСТОПОЛЬ хули енче пирĕн ҫарсем, тăшман хирĕҫ тăнине сире-сире ярса тата Крымăн кăнтăр ҫыранĕнчи тулă-вăрманлă пайĕнче тăшманăн инженерла чăрмавĕсене ҫĕмĕре-ҫĕмĕре, ҫаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — Крымăн АЛБАТ район центрĕ, БЕРЕГОВОЕ, АДЖИ-БУЛАТ, КАЧА-МАМАШАЙ, БЕЛЬБЕК, ЛЮБИМОВКА, ДУВАНКОЙ, ЗАЛАНКОЙ, ШУЛИ, ДЕМЕРДЖИ, СЕМИДВОРЬЕ, СОТЕРА, КУЧУК-УЗЕНЬ, ТУАК ятлă ялсем тата СЮРЕНЬ, БЕЛЬБЕК ятлă чугун ҫул станцийĕсем.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт ҫарĕсем апрелĕн 14-мĕшĕ вĕҫленнĕ тĕле тăшманăн 20.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Ҫав вăхăт тĕлнех, туллимар даннăйсем тăрăх, ПРИМОРСКИ Уйрăм Арми ҫарĕсем тăшманăн 17.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Ҫапла вара апрелĕн 14-мĕшĕ вĕҫленнĕ тĕле Крымра пирĕн ҫарсем тăшманăн 37.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтан ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн ҫапăҫнă.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 69 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЙЫШЛĂН ВĔҪСЕ КАЙСА СЕВАСТОПОЛЬ ПОРЧĔПЕ ЧУГУН ҪУЛ СТАНЦИНЕ ТАПĂННИ

Апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн енҫете вĕҫекен авиаци, йышлăн вĕҫсе кайса, Севастополь порчĕпе чугун ҫул станцине тапăннă тата пĕр ҫĕре капланса тăнă тăшман ҫарĕсемпе техники ҫине, ҫар склачĕсем ҫине тата Севастополь бухтинче тăракан нимĕҫ суднисем ҫине бомбăсем пăрахнă. Пушарсем тухнă тата взрывсем нумай пулнă. Горючи склачĕсен районĕнче питех те вăйлă взрывсем пулни палăрнă. Пуринчен те вăйлă пушарсемпе взрывсем чугун ҫул станцийĕпе кăнтăрти бухтăра пулнă.

АПРЕЛĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 16-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем КИШИНЕВ хули енче чылай участоксенче ДНЕСТР шывĕ урлă каҫнă та унăн сылтăм енче плацдармсем тытса илнĕ, вара ҫав плацдармсене аслăлатасшăн ҫапăҫнă.

ТИРАСПОЛЬ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн ҫарсем ДНЕСТР шывĕ урлă каҫса кайнă та УРСОЯ, КИЦКАНЬ, КОПАНКА ялĕсене туртса илнĕ, вара ҫав тытса илнĕ плацдарма аслăлатасшăн ҫапăҫнă.

ПРИМОРСКИ Уйрăм Арми ҫарĕсем, наступление вăйлатса пырса, ЯЛТА хулипе Хура тинĕс ҫинчи порта туртса илнĕ. ЯЛТА вăл тăшман оборонин Крымăн кăнтăр ҫыранĕнчи тĕреклетнĕ пункчĕсенчен пĕри пулнă. Ҫавăн пекех тата тăшманпа ҫапăҫса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — АЛУПКА хули, ГУРЗУФ, ЛИВАДИЯ, КОРЕИЗ, СИМЕИЗ, АРТЕК, НИКЕНЕИЗ ятлă курорт поселокĕсем тата АДЫМ-ЧОКРАК, КОКЛУЗ, КОККОЗЫ, ЛИМЕНЫ, КУЧУККОЙ ятлă ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса ҫӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн ҫапăҫнă.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕҫсен 91 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă, сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 78 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ СЕВАСТОПОЛЬ ПОРЧĔПЕ ЧУГУН ҪУЛ СТАНЦИНЕ ТАПĂННИ

Апрелĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн авиаци каллех Севастополь порчĕпе чугун ҫул станцине тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула чугун ҫул станцинче пушарсем тухнă. Чи вăйлă пушарсем ҫĕр кăмрăкĕпе нефть пристанĕнче пулнă. Бомба тӳрех пырса тивнипе тăшманăн портра тăракан 3.000 тонна таякан судни шыва путнă. Ҫавăн пекех тата кăнтăрти бухтăра тăракан суднăсем хушшинче темиҫе вăйлă взрыв пулни палăрнă.

* * *

Кишинев хули енче пирĕн ҫарсем, тăшман хытă хирĕҫ тăнине ҫĕмĕрсе тăкса, чылай вырăнсенче Днестр шывĕ урлă каҫнă. Нимĕҫсем, совет чаҫĕсене шыва хăваласа кĕртме хăтланса, темиҫе контратака тунă. Пирĕн пехотинецсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă, 800 гитлеровеца ҫити пĕтерсе тăкнă. Тăшманпа ҫапăҫса малалла куҫса пырса, пирĕн ҫарсем Днестр шывĕн сылтăм енчи плацдармсене утăм хыҫҫăн утăм аслăлатса пыраҫҫĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен кăнтăртарахра пĕр соединени боецĕсем Днестр шывĕ урлă сасартăк каҫнă та, ҫав тери хăвăрт атакăласа, темиҫе ял туртса илнĕ. Ҫав ялсемшĕн пынă ҫапăҫусенче нимĕҫсен 1000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 11 тупă, 27 пулемет, 8 миномет, боеприпас склачĕ тата апат-ҫимĕҫ склачĕ тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур, вĕсем хушшинче тăшман батальонĕн командирĕ пур.

* * *

Приморски Уйрăм Армин ҫарĕсем ҫаплах ăнăҫлă наступлени туса пынă. Совет чаҫĕсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан тăшман ҫулсем ҫине минăсем нумай лартса хăварать, ҫулсене тĕрлĕ япаласемпе пӳле-пӳле хурать, кĕперсене сирпĕтсе хăварать. Гурзуфпа Ялта патнелле пымалли вырăнсенче нимĕҫсем артиллерипе пулемет заслонĕсем тăратнă. Вĕсем оборонăра тăмалли лайăх вырăн вĕсене совет ҫарĕсене нумайлăха чарса тăма май парĕ тесе шутланă. Пирĕн боецсем штурмлакан пĕчĕк ушкăнсене пайланă та ту сукмакĕсемпе кайса, тăшман заслонĕсен хыҫне пырса тухнă, тăшмана тылран пырса ҫапнă. Наступление вăйлатса пырса, Приморски Уйрăм Арми ҫарĕсем Ялта хулипе портне, Алупка хулине тата Гурзуф, Артек, Ливадия, Кореиз, Симеиз, Никинеиз ятлă курорт поселокĕсене туртса илнĕ. Ялтăра трофейăсем нумай тытса илнĕ, тыткăна илнисем нумай. Гурзуфра тăшманăн иккĕмĕш горно-стрелковăй дивизийĕнчи иккĕмĕш батальон хăйĕн командирĕпе пĕрлех тыткăна парăннă. Тусем ҫинче хаяр ҫапăҫусем пыраҫҫĕ. Совет чаҫĕсем тусем хушшинче пытаннă гитлеровецсене хăваласа пыраҫҫĕ, ҫавăра-ҫавăра илеҫҫĕ те пĕтерепĕтерсе тăкаҫҫĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 ҫынна тыткăна илнĕ. Нимĕҫсенчен 80 тупă, 110 миномет, 7.000 винтовкăпа автомат, ҫар хатĕрĕсем турттарса пыракан 250 автомашинăпа лав, 2.400 лаша, боеприпас, апат-ҫимĕҫ тата тĕрлĕ ҫар пурлăхĕн 25 складне тытса илнĕ. Тыткăна лекнĕ нимĕҫ салтакĕсем ҫапла каласа кăтартнă: 98-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ Гарейс тата полксен командирĕсем ҫав дивизие Керчь ҫурутравĕ ҫинче аркатса тăкнă хыҫҫăн «Крым чирĕпе» чирлесе ӳкнĕ те самолет ҫине ларса вĕҫсе кайнă. Паллă пулнă тăрăх, ҫавăн пекех тата нимĕҫсен ытти нумай генералĕсемпе аслă офицерĕсем те, хăйсен салтакĕсене пăрахса хăварса, Крымран тарнă.

Хура тинĕс флочĕн карапĕсем нимĕҫсем Крымран ларса тухса тарма хăтланакан суднисене пыра-пыра ҫапаҫҫĕ. Паян тăшман пехотине турттарса пыракан хăй тĕллĕн ҫӳрекен 4 баржăна шыва путарнă, тăшманăн темиҫе суднине сиенленĕ.

Пирĕн авиаци Херсонес сăмсахĕ ҫинчи аэродромри тăшман самолечĕсене пĕтерсе пынă. Кун каҫиччен ҫав аэродром ҫинче нимĕҫсен 28 самолетне ҫĕмĕрсе тăкнă е ҫунтарса янă. Тата унсăр пуҫне сывлăшри ҫапăҫусенче тăшманăн 10 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Румынсен 10-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи саперсен батальонĕн тыткăна илнĕ командирĕ подполковник Стефан Букуренчу ҫапла каласа кăтартнă: «Вырăссен наступленийĕ пуҫланас умĕн темиҫе кун маларах пирĕн дивизи командирĕ приказ кăларчĕ. Вăл приказпа пур офицерсене те паллаштарчĕҫ. Унта ҫапла каланăччĕ: командовани Крыма юлашки салтак пĕтиччен тытса тăма хушать, тенĕччĕ. Офицерсем ҫак приказа пурнăҫа кĕртме пулассине шанса тăнă. Перекоп перешеекĕ ҫинчи укрепленисене эпир никам та тытса илеймĕ тесе шутланăччĕ. Эпир ҫапла шанса тăнине Крымра нимĕҫсемпе румынсен йышлă ҫарĕсем, ҫар техники тата артиллерипе минометсем нумай пулни ҫирĕплетсе тăчĕ. Офицерсем ҫапла шутлатчĕҫ: Перекоп перешеекне татса шаларалла кĕрсе кайма вырăссене сахалтан та темиҫе эрне кирлĕ пулĕ тетчĕҫ. Анчах та ĕҫ пачах урăхла пулса тухрĕ. Вырăссен наступленийĕ тĕлĕнмелле вăйлă та хăвăрт пулса кайрĕ. Пуринчен те пысăк сухатусем совет артиллерийĕпе танкĕсем кӳчĕҫ. Вырăс пехоти пырса ҫапнă хыҫҫăн вара пирĕн оборона пĕтĕмпех саланса кайрĕ.

Кăҫалхи мартăн 25-мĕшĕпе апрелĕн 12-мĕшĕ хушшинче тăшман тӳснĕ ҫухатусем тата Украинăри 3-мĕш фронт ҫарĕсем тытса илнĕ трофейăсем

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем, арми генералĕ МАЛИНОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе, мартăн 25-мĕшĕпе апрелĕн 12-мĕшĕ хушшинче КĂНТĂР БУГ шывĕнчен пуҫласа ДНЕСТР шывĕ патне ҫитиччен наступлени туса пырса, тăшмана ҫынсемпе техника тĕлĕшĕнчен ҫакăн пек ҫухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем — 42, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 199, минометсем — 83, пулеметсем — 589, автомашинăсемпе тягачсем — 436.

Ҫапăҫу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 26.800 вилли выртса юлнă.

Ҫав вăхăт хушшинчех УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем нимĕҫсенчен ҫакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем — 7, танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем — 401, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 753, минометсем—291, пулеметсем — 991, винтовкăсем — 8.820, радиостанцисем — 101, автомашинăсем — 10.672, мотоциклсем — 481, тракторсемпе тягачсем — 208, бронетранспортерсем — 46, автоприцепсем—392, ҫар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 6.203, лашасем—2.076, паровозсем — 287, вагонсемпе платформăсем тата цистернăсем —6.104, вĕсенчен 1.377-шĕ боеприпас, апат-ҫимĕҫ, горючи, заводсен оборудованийĕ, инженерла-техникла тата ытти ҫар пурлăхĕ тиенĕскерсем, складсем — 95, вĕсенчен 52-шĕ боеприпас склачĕсем, 38-шĕ апат-ҫимĕҫ склачĕсем, 3-шĕ йĕплĕ пралук склачĕсем, 2-шĕ цемент склачĕсем.

10.680 нимĕҫ салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Ҫапла ĕнтĕ, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем мартăн 25-мĕшĕпе апрелĕн 12-мĕшĕ хушшинче наступлени туса пынă вăхăтра тăшман хăйĕн ҫар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе ҫыннисене ҫакăн чухлĕ ҪУХАТНĂ: тыткăна илнисемпе вилнисем — 37.480 ҫын, танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем — 443, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 952, автомашинăсемпе автоприцепсем тата тягачсем — 11.708.

СОВИНФОРМБЮРО.

Кăҫалхи мартăн 6-мĕшĕпе апрелĕн 15-мĕшĕ хушшинчи ҫапăҫусем вăхăтĕнче тăшман тӳснĕ ҫухатусем тата Украинăри 2-мĕш фронт ҫарĕсем тытса илнĕ трофейăсем

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем, Совет Союзĕн Маршалĕ КОНЕВ командир пулса ертсе пынипе, мартăн 6-мĕшĕпе апрелĕн 15-мĕшĕ хушшинче наступлени туса пырса, тăшмана ҫынсемпе техника тĕлĕшĕнчен ҫакăн пек ҫухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем: — 142, танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем — 688, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 1.474, минометсем — 1.838, пулеметсем — 3.660, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем — 356, автомашинăсем — 25.111, тягачсем — 248, лавсем — 6.453, лашасем — 8.740, боеприпас тата ҫар техники пурлăхĕн склачĕсем—63.

Ҫапăҫу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 118.400 вилли выртса юлнă.

Ҫав вăхăт хушшинчех УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем ҫакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем — 27, танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем—731, тĕрлĕ калибрлă хир тупписем — 1.356, минометсем—1.156, пулеметсем — 2.090, винтовкăсем — 27.093, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем — 204, автомашинăсем — 15.096, тягачсем — 149, радиостанцисем — 198, лавсем — 1.470, лашасем — 6.260, паровозсем — 71, вагонсем — 4.009, снарядсем — 6.340.000, ҫар техники пурлăхĕн склачĕсем — 76.

27.393 нимĕҫ салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Ҫапла ĕнтĕ, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт ҫарĕсем наступлени туса пынă вăхăтра нимĕҫсем хăйсен ҫар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе ҫыннисене ҫакăн чухлĕ ҫухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем — 145.793, самолетсем — 169, танксемпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен тупăсем — 1.419, тĕрлĕ калибрлă тупăсем 2.830, минометсем — 2.994, пулеметсем — 5.750, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем — 560, автомашинăсем —40.207.

СОВИНФОРМБЮРО.

Хĕрлĕ Ҫарăн Сывлăш-ҫар вăйĕсен офицерĕсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăҫланăшăн тата ҫавăн чухне хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн кăҫалхи апрелĕн 13-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Ҫарăн Сывлăш-ҫар вăйĕсен офицерĕсен пĕр ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Ылтăн Ҫăлтăр» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз Геройĕн ятне мĕн пурĕ 67 офицера панă. (ТАСС).

Кингисепп хулине юсаҫҫĕ

Фронт линийĕ иртсе кайман-ха, анчах Кингисепп хулинче (Ленинград облаҫĕ) хула хуҫалăхне юсаса ура ҫине тăрасас тĕлĕшпе чылай ĕҫсем тунă ĕнтĕ. Темиҫе вунă ҫурта юсанă, электростанци хулана электричество токĕ панă, Кингисеппа Ленинград хушшинчи телефон ҫыхăнăвне йĕркеленĕ, театр уҫнă, магазинсем, столовăйсем, парикмахерскисем, мунча, больница ĕҫлеме тытăннă.

Кингисепп районĕнчи колхозниксем 115 колхоза ҫĕнĕрен йĕркелесе янă, хаваль ҫуракине анлăн хатĕрленеҫҫĕ. (ТАСС).

Арми генералĕ А. И. ЕРЕМЕНКО.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти топливо промышленность предприятисен вырăнти топливо хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1944 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри вырăнти топливо промышленность предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура март уйăхĕнче вырăнти топливо хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе Елчĕк, Советски, Красноармейски вăрманпромхозĕсем мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Елчĕк вăрманпромхозĕнчех (директорĕ Тимофеев юлташ) хăварса, ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 20 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Советски тата Красноармейски районсенчи вăрманпромхозсене иккĕмĕш преми — 10 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Ĕçе лайăх ертсе пынипе

1942 çулхи июнь уйăхĕнче Хорасев юлташ пĕтĕмпе те 4 рабочи çеç ĕçлесе тăракан, уйăхне 700—800 тенкĕлĕх çеç тавар туса кăларакан Ишлейри промкомбината йышăннă. Тĕрĕссипе вăл комбинат мар, пĕчĕк артель кăна пулнă.

Капла ĕç тухмасть, çĕнĕ производствăсем пуçласа ярас пулать, тенĕ çамрăк управляющи. Пур пек майсемпе усă курса, 1943 çулта çĕнĕрен 7 тĕрлĕ производство организациленĕ. Атă-пушмак юсама, çĕвĕ çĕлеме, çуна-урапа, каткапичке, тир-сăран тата супăнь тума пуçланă. Виçĕ тĕрлĕ япала вырăнне 22 тĕрлĕ япала тума пуçланă, ĕçлекенсен йышĕ те çĕр çынна яхăн çитнĕ.

Производствăна çапла аслăлатса, 1943 çулта продукци туса кăларассине 5,5 хут ӳстернĕ, 1943 çулхи плана пĕтĕмпе 202 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 197 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне икĕ уйăх хушши хăйĕн аллинче тытса тăнă, пилĕк хутчен преми илнĕ.

Промкомбинат кăçал та начар мар ĕçлет. Производство планне уйăхран уйăха ытлашшипех тултарса пырать.

Комбинатăн чи тупăшлă ĕçĕ—тир тăвасси. Вăл çапла пуçланса кайнă. Шупашкар станцинче вагонĕ-вагонĕпе тир выртнă. Çакăн çинчен Хорасев юлташ пĕлнĕ. Шупашкара, Советсен çуртне темиçе çитсе, çав тирсемпе усă курма ирĕк илнĕ. Суйланă хыççăн унтан 13 пин ытла тир тухнă.

Часах ĕçе пĕлекен çынсене тупнă та 4 çĕрте тир тума тытăннă. Çак кирлĕ ĕç хăвăрт сарăлса пынă. Иртнĕ çулта 50 пин тăваткăл дециметр тир тăвас вырăнне 165 пин тăваткăл дециметр тир туса кăларнă. Илнĕ тупăшпа 13 пин тирĕн хакне тӳлесе янă.

Тир тăвас ĕç халĕ те ăнăçлă пырать. Кăçалхи 1-мĕш квартал планне тултарнă та ĕнтĕ. Çакă вăл—тир тăвакансен тухăçлă ĕçленин результачĕ. Кунта уйрăмах Тимофеевăри тир ĕçлекен М. Путякова юлташа палăртмалла. Вăл хăйĕн заданине 2—3 хут ирттерсе тултарать. Ашшĕ тата тирсенчен хĕрачи кĕрĕк-пиншаксем çĕлет. Мижер ял çынни Н. Ротманов декабрĕнче 195 кĕрĕк-пиншак çĕленĕ. Халĕ вăл Китай качкисен тирĕнчен дохасем çĕлеме вĕренет. Унсăр пуçне 4 çамрăка çĕлес ĕçе вĕрентет.

Хорасов юлташ пуçарăвĕпех çăматă йăвалакан цех уçнă. Унта 12 ăстаçă, 5 вĕренекен ĕçлесçĕ. В. Бедягин, А. Толстой, Д. Селиванов тата С. Синельников — çак цехри палăл стахановецсем. Цех заведующийĕ С. Зайцев юлташ лайăх ертсе пынипе, вĕсем кунне 6—7 мăйла çăматă йăвалассĕ. Иртнĕ çулта çăматă йăвалассипе плана 160 процент тултарнă.

Комбинат коллективĕ колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшать. Çак квартал та ут тавраш ĕçĕсем пулассипе 1,5 хут ирттерсе тултарнă та ĕнтĕ. Чăпăл шорник М. Козлов Ишлеври ячĕпе тăракан колхозăн хăмăт-хатĕрĕсене юсаса парать.

Ишлейри промкомбинатăн вăрçă вăхăтĕнчи тунă ĕçĕ ситĕнĕвĕсем пĕчĕк мар. Анчах унăн управляющийĕн коммунист М. Хорасев юлташăн лайăх ĕçлес çул пурах. Вăл производствăна пысăклатма питĕ нумай ĕçлет. Унăн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Вăл промкомбинатăн выльăх-чĕрлĕхне пăхас ĕçе пăрахнă. Ф. Гаврилов механик двигателе чукмакпе çĕмĕрсе туса ситерет. 18 лаша вăйлă двигатель апрельте ĕçлеме пуçлать. Унăн вăйĕпе çăматă йăвалакан тата тимĕр-тăмăр кассалакан цехсене хăлаламалла. Çапла туни производствăна 2 хут ӳстерме пулăшать.

— Ун чух Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне каллех кĕртетпĕр, — тет пуласси çирĕп шанса çамрăк коммунист Хорасев юлташ.

ТАРАС ИВАНОВ.
(Хамăр корр.)

ÇАР ĔÇНЕ ЮРАТСА ВĔРЕНЕÇÇĔ

КАЛИНИНО. Ассакассинчи тулли мар вăтам шкулти çамрăксен ĕçне тимлĕн тĕрĕсленĕ. Военрук Г. Михеев юлташ ... çамрăксене çар ĕçне вĕрентес енĕпе пысăк ĕç ирттерет. Вăл тĕрĕсленĕ çамрăксене ... Унта вĕренекенсем винтовкăсене, гранатăсене тата кĕреçесене ... вĕренмелле хăйсене туса ... .

Т. СТЕПАНОВ.

Çураки кунĕсем умĕн

Кĕрхи калчасене апатлантараççĕ

КАЛИНИНО. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесен, уйри ĕçе çуракине тухиччен тытăнмалла. Çакна Услапари «Броневик» колхоз членĕсем лайăх ăнланса илнĕ.

Апрелĕн 8-мĕшĕнче кунта колхоз активĕн çураки умĕнхи канашлăвĕ пулса иртрĕ. «Броневик» колхозăн уйхирĕ сăртлă-çырмаллă вырăнсенче вырнаçнă. Хăшпĕр вырăнсенче юр ирĕлсе пĕтсе кĕрхи калчасем тухнă, уйрăм вырăнсенче темĕн хулăмĕш юр выртать. Паллах ĕнтĕ, юр пĕр тикĕс ирĕлменни ăнăçлă япала мар. Юр маларах ирĕлнĕ вырăнсенче кĕрхи калча шăнма е типсе кайма пултарать, çавăн пекех юр нумай выртакан вырăнта та калча тарласа е çĕрсе пĕтме пултарать.

Çавăнпа та «Броневик» колхоз членĕсем юр кайса пĕтнĕ вырăнсене çĕрнĕ тислĕкпе кĕл сапма шухăшларĕç. Ку вăл паха агромероприятисенчен пĕри пулса тăрать. Çиелтен çĕрнĕ тислĕк сапни, мулчировани тунă пекех, калчана шăнма тата çĕре типме памасть. Тислĕкпе пĕрле кĕл сапни—калчана апат панипе пулать. Çакна шута илсе, кунта апрелĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа 11-мĕшне çитиччен 40 гектар ыраш калчи çине тислĕкпе кĕл сапса, калчана апат парăç. Ку ĕçре А. Сорокинпа К. Сорокин бригадисем мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Уйрăмăнах Мария Семенова, Елизавета Быкова, Евгения Сергеева, Анастасия Михайлова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Ыраш калчисем çинче нумай юрлă вырăнсенче ку колхозра кăмăка хăрăмĕ тата кĕл сапрĕç. Çапла туни юра хăвăртрах ирĕлтерет. Уйрăм вырăнсенчи хулăм юрлă вырăнсене тимĕр кĕреçесемпе чавса кăпăшлатрĕç. Пурĕ 9 гектар çине кăмака хăрăмĕпе кĕл сапрĕç.

— «Броневик» колхоз членĕсем кăçал хăйсен умне кашни гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес задачăна лартрĕç. Çак задачăна пурнăçлас пирки пирĕн колхозниксем сăмахпа мар, ĕçпе пурнăçлама тытăнчĕç, —тет «Броневик» колхоз председателĕ Федоров юлташ.

С. ВОРОБЬЕВ,
Райсемхозăн «Броневик» колхозри агрономĕ.

Лашасем çине чунсăр пăхассине пĕтермелле

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районри уйрăм колхозсем лашасене лайăх пăхса усрас тата вĕсемпе тĕрĕс усă курас ĕçе хаклаçмаççĕ. Çавна пула хăшпĕр колхозсенче лашасем питех те начарланса çитнĕ.

«Çĕнтерӳ» колхозра (председателĕ Чернотлазов) лашасем çине чунсăррăн пăхнине пула кăçал 8 лаша вилнĕ. Çавăн пекех кунта кăçал 6 пĕтĕ кĕсререн 5-ĕшĕ хăм пăрахнă. Çак колхозăн лашасем валли çителĕклĕ тăран апат хатĕрлесе хăварма майсем пулнă. Анчах та колхоз руководителĕсем ку тĕлĕшпе ответлăха туймасăр ĕçленине пула, лашасем валли çителĕклĕ тăран апат хатĕрлемен. Çӳлте асăннă колхозăн руководителĕсем иртнĕ кĕркунне районри организацисене «лаша апачĕсем çитеççĕ» тесе суя сведенисем парса тăнă.

Лашасене çитерме апат çителĕклĕ тăран хатĕрлесе хăварман пирки тата лаша апатне салатса пĕтернине пула, «Красный луч» колхоз та питех те пысăк хăрушлăх умĕнче тăрать. Анчах та колхоз руководителĕсем çак хăрушлăхран тухас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ-ха. Турхан ялсоветне кĕрекен «Октябрь» колхоз колхозникĕсем О. Кудряшовпа В. Косойкина иртнĕ çулта пĕрер лаша вĕлернĕ. Анчах кунта паян куна çитсе те çак киревсĕр ĕçшĕн ответ тытман.

Лашасене пăхса усрас тата вĕсемпе тĕрĕс усă курас ĕç çине чунсăр пăхакан колхоз руководителĕсем государство умĕнче ответлă пулнине туйса илме тахçанах вăхăт çитнĕ.

В. ДАВЫДОВ.

305 колхозник хутшăннă

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Вăрлăх çитмен колхозсене пулăшма тырпул пухасси районра халĕ те сарăлса пырать. Ку таранччен районĕпе 1.818 пăт тырă, 1.572 пăт çĕрулми тата 162 пăт йĕтен-кантăр вăрлăхĕ пухнă. Азаматри Киров ячĕпе тăракан колхоз, пĕчĕккĕ пулин те, вăрлăх çитмен районсене пулăшма 40 пăт тырă, 50 пăт çĕрулми пачĕ, Качалаври «Труд» колхоз 100 пăт тырă, 150 пăт çĕрулми тата 12 пăт кантăрвăрри пачĕ. Хирлеппусĕнчи «Красный Октябрь» колхоз та тĕрлĕрен вăрлăхсем 260 пăт пачĕ.

Çак патриотла ĕçе уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем активлăн хутшăннă. Самушкăри колхоз счетоводĕ коммунист Гаврилов 6 пăт, Качалаври «Труд», колхоз председателĕ Быков—15 пăт, Ураскилтри «Маяк» колхозпа Мăн Тукташри Горький ячĕпе тăракан колхоз председателĕсем Мироновпа Иванов 6-шар пăт пачĕç. Районĕпе вăрлăх çитмен колхозсене пулăшас ĕçе 305 колхозник хутшăннă.

Х. ЛИСИН.

„Молния“ колхозра

ОКТЯБРЬСКОЕ. Ильменкассинчи «Молния» колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине комисси тĕрĕсе тухрĕ. Тĕрĕслерĕ пирĕ район представителĕсем ... Колхоз пурне те тĕплĕн пăхса тухрĕ. Çитменлĕхсем тупаймарĕ. Вăрлăхсем тасатнă, сыхласа тăваççĕ. Лашасем самăр. Вĕсемпе çуракине вăрлăх тата выльăх апачĕ турттарни çĕрте усă курассĕ.

Колхоз тислĕк турттармалли, вырăнти удобренисене пухмалли плана пысăк пурнăçланă. Колхозниксем хăйсен хуçалăхĕсенчи тислĕкне те уя кăлараççĕ. Акă, А. Михайлова колхозница хăйĕн хуçалăхĕнчен 18 лав тислĕк кăларнă. Колхоз çу ĕтемĕ 2.010 лав тислĕк кăларнă, кĕл 59 центнер, кайăк-кăшăк тислĕкĕ 22 центнер пухса хатĕрленĕ.

Колхозниксем çураки ĕçĕсене кăçал та, иртнĕ çулти пекех, 8 ĕç кунĕнче вĕçлеме шутлаççĕ. Ĕç планне çирĕплетнĕ. Халĕ кашни колхозник çуракинче хăй ăçта ĕçлемеллине лайăх пĕлет. Çураки вăхăтĕнче пĕрле апатланма столовăй пулать.

Вăйлă тырпул туса илес тесен, агротехникăна тĕплĕн пĕлмелле. Çавăнпа та колхозниксем агротехника кружокĕнче вĕренчĕç. Вĕсене М. Рыбкина агроном ертсе пычĕ. Апрелĕн 10-мĕшĕнче кружокран 30 колхозник вĕренсе тухрĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем республикăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панине питĕ савăнса кĕтсе илчĕç. Хăйсен пуххăвĕнче вĕсем кăçал вăйлă тырпул туса илме пулчĕç.

И. АНДРЕЕВ.

АГРОТЕХНИКА КĔТЕСĔ

Кок-сагыз вăрлăхне акма хатĕрлесси

Кок-сагыз вăрлăхне вĕтĕ, сулхăнрах тăракан сантлакра питĕ вăрлăха шăтать. Çавăнпа ăна 2—3 сантиметр сурă тăрăмăшне тăна акмалла. Çурхине, çĕрĕ сийĕсен ... хатĕр та хăпарнă ... тата вăрлăхсем калчисем сайра ... Кок-сагыз вăрлăхне вăхăтра хатĕрлесе ... хатĕрлемелле.

... вăрлăхăн пахалăхĕ пăсăлать; 0 градусран кая пулсан — вăрлăхсем шăнма пултараççĕ. Сывлăшпа улăштарса çĕнетес шутпа, михĕри вăрлăха 5—6 кун иртнĕ хыççăн юр айĕнчен илсе, михе салтса, унти вăрлăха силлесе пăтраштармалла.

Çакăн пек условире 20—25 кун хушши тытсан, вăрлăхсем пурте шăтаççĕ. Çĕр акма юрăхлă пулсан, вăрлăха юр айĕнче тытма пăхнă срок çитиччен акма тытăнмалла. Сантлак условийĕсене пула акма май çук пулсан, вăрлăха юр айĕнче 25 кунран та ытларах тытма юрать, вĕсем хăйсен пахалăхне пурĕ-пĕрех çухатмаççĕ.

Вăрлăха стратификаци тунă чухне температурăна мĕнле тытмалла-ха? Ирĕлекен юр е пăр яланах нуль градусĕ пулать. Вăрлăхсем вара ирĕлекен юр е пăр айĕнче нуль градусран пуçласа пĕр градуса çити ăшăра выртаççĕ, вăрлăхсем сывлаççĕ, çавăнпа та вĕсенче ăшă нуль градусран ытларах пулать.

Çак ĕçе тума йывăр мар. Анчах ĕç ăнăçлă пултăр тесен, ку ĕçе тума ответлă çынна уйăрмалла, кирлĕ пек инвентарь тата юр çителĕклĕ таран хатĕрлемелле, нӳхреп тупмалла.

Вăрлăха нӳхрепрен кăларсанах акма май çук; вăл йĕпе тата чăмăркаланса тăрать. Акма юрăхлă тăвас тесен, вăрлăха нумаях мар типĕтсе вир хупăкипе е пăчкă кĕрпипе хутăштармалла. Анчах вăрлăха ытлашши типĕтсе яма юрамасть, унăн хуппи çеç типтĕр, тĕшши нӳрлĕ пултăр.

Типĕтнĕ вир хупăкипе е аласа тасатнă пăчкă кĕрпипе вăрлăха пĕтĕмпех пĕртан пăтраштармалла. Вăрлăхăн шăтас пахалăхĕ 80 процента çитет пулсан, пĕр гектар çине 2,5 килограмм акас пулать. Çакăн пек хатĕрленĕ вăрлăхăн калăпăшĕ вара 5 литрпа тан пулмалла. Хутăштаракан япаласен калăпăшĕ пĕр гектар çине 10—11 хут ытларах пулмалла (56 литр шучĕ). Çакăнтан шутласа сеялкăпа акмалли нормăна лартмалла та ĕнтĕ.

Çакăн пек стратификациленĕ вăрлăха çийĕнчех акас пулать. Акма чарăнас пулсан, ăна каллех нӳхрепе юр айне хумалла. Мĕншĕн тесен вĕсем сăмсаланма пултараççĕ. Хирте вăрлăха нӳрлĕ михĕре тытас пулать, çил тата хĕвел ан тивтĕр тесе витсе хумалла. Машинăпа е алăпа аксан та, вăрлăха пур-пĕрех çакăн пек майпа хатĕрлемелле. Вăрлăха тĕрĕслесе пăхас шутпа, пĕчĕк ещĕк çине пĕр сантиметр таранăшне акса сăнамалла. Пӳртре 17 градус ăшă чухне 4—5 кун тытнă хыççăн калчасем шăтсан, вăрлăха тĕрĕс хатĕрленĕ темелле.

Кок-сагыз вăрлăхне акма хатĕрлесси питĕ ответлă та кирлĕ ĕç. Çавăнпа та колхоз председателĕсем, бригадирсем тата звеньевойсем çак ĕçе тимлĕн тумалла.

А. ПОПЦОВ,
Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ.

Италири политикăллă лару-тăру çинчен

Апрелĕн 16-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче совет журналисчĕсемпе ют çĕршывсен журналисчĕсен пресс-конференцийĕ пулса иртнĕ. Унта ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ, Италире политикăллă лару-тăру мĕнле тăни çинчен ыйтусем панă пирки, çапла пĕлтернĕ:

Хальхи вăхăтра Германие хăвăртрах çĕнтерес ĕçре Итали паллă вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен унта союзниксен Германие хирĕç кĕрешме пысăк плацдарм пур. Бадольо правительствипе перемири тунăранпа 7 уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăт ирĕке кăларнă Италири демократиллĕ тата фашизма хирĕçле вăйсене пĕрлештерме, вĕсене Гитлерăн хĕçпăшаллă вăйĕсене тата Муссолинин фашистла кĕтĕвĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе активлăн явăçтарма çителĕклех пулнă. Анчах та Италире Бадольо правительствипе исполнительнăй джунта хушшинче халĕ те кĕрешӳ пырать-ха. Бадольо правительствине демократиллĕ çĕршывсемпе пĕрлешсе фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме хатĕр тăракан ушкăнсем пулăшса тăраççĕ, исполнительнăй джунтăна союзниксемпе пĕрлешсе Гитлерла Германие хирĕç активлăн кĕрешме тăрăшакан демократиллĕ ушкăнсен чылай пысăк пĕрлешĕвĕ пулăшса тăрать.

Çавăн пек пулни вăл союзниксен тăшманĕсемшĕн кăна усăллă. Çавăн пек пулнине пĕтересси, демократиллĕ вăйсемпе фашизма хирĕçле вăйсене пĕрлештересси, союзниксен Германие хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн интересĕсемшĕн тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕçе хăвăртлатассишĕн çав вăйсене пĕрлештерме пултаракан правительство туса хурасси—халех тумалли ĕç пулса тăрать.

Çӳлте асăннисене шута илсе, союзниксен Германие поражени тӳстерессине хăвăртлатассишĕн пыракан кĕрешĕвне хутшăнма хатĕр тăракан политикăллă ушкăнсем пĕр-пĕринпе хирĕçнине часрах пĕтерсе лартас тесе тăрăшса, Совет правительстви США-па Великобритани правительствисене ирĕке кăларнă Италири мĕнпур демократиллĕ тата фашизма хирĕçле вăйсене пĕрлештермелли мерăсене пĕрле пăхса тухма сĕннĕ, Бадольо правительствин йышне унта фашизма хирĕç кĕрешекен партисен представителĕсене кĕртсе лайăхлатма сĕннĕ. Çакă паллă: Мускаври конференци союзниксене Итали тĕлĕшпе те пĕрлешсе ĕçлеме çирĕп никĕс хывса панă, вăл тӳрех çапла каланă: «Итали правительствине демократиллĕрех тумалла, унта Итали халăхĕн яланах фашизма хирĕç кĕрешнĕ сийĕсен представителĕсене кĕртмелле», тенĕ.

Юлашки вăхăтра, СССР, США тата Великобритани, пĕр-пĕринпе канашласа, çав ыйтăва Итали тĕлĕшпе ĕçлекен консультаци советĕнче пăхса тухма лартнă. Консультаци совечĕ вара хăйĕн çак кунсенче йышăннă резолюцийĕнче çапла каланă: правительство тăвас ыйтăва кирлĕ пек татса панипе тата Бадольо маршал пур партисен представителĕсене те кĕртсе халех правительство туса хунипе Совет ырланă пулĕччĕ, тенĕ. Консультаци совечĕ тата çапла тума шутланă: Бадольо правительстви союзниксем тĕлĕшпе илнĕ пур обязательствăсене те çĕнĕ правительство хăй çине илме кăмăл туйни çинчен пĕлтермелле, конституци ыйтăва халĕ май пур таран татса панине Итали халăхĕ хăйĕн шухăшĕсене ирĕклĕн каласа пама пултарас вăхăт çитиччен улăштармалла мар.

Консультаци совечĕн çак решенийĕ хальхи вăхăтра союзниксен пĕр пек шухăшне палăртса тăрать, вăл Совет правительстви сĕннипе килĕшсе тăрать, вăл Италири политикăллă лару-тăру ыйтăвне татса парас ĕçре малалла çĕнĕ утăм туни пулса тăрать.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИ ДЖУНТИ ЙЫШĂННĂ РЕШЕНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Неапольри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Италин яланхи исполнительнăй джунти апрелĕн 15-мĕшĕнче постановлени йышăннă. Çав постановленире Италире халĕччен демократиллĕ çар правительстви тума кансĕрлесе тăнă чăрмавсене хăль пĕтерсе партни çинчен каланă. Апрелĕн 15-мĕшĕнче кăçхине джунта хăйĕн тăвата сехет хушши пынă ларăвĕ хыççăн пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Союзниксем Рима ирĕке кăларнă хыççăн Король королевство правителĕ пулма Умбертона лартма шут тытнине тата унăн министрĕсем вăрçă пĕтнĕ хыççăн Итали халăхĕ государствăн пулас формине хăй палăртса хурĕ тесе темиçе хут та каланине джунта асра тытать. Çĕршывăн аслă интересĕсемшĕн тăрăшса джунта çĕнĕ правительствăна часрах туса хума хистет. Çав правительствăна пурнăçчен малтан Италие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетсене хăйсен представителĕсене янă ултă партин пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес йĕркепе туса хумалла. Джунта çав правительствăна мĕнле тунине тимлĕн асăрхаса тăрĕ. Çав правительство чăннипех фашизма хирĕç кĕрешекен демократиллĕ правительство пулмалла, вăл Италие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен пĕрлешӳллĕ наци правительстви пулмалла, вăл фашистла режимăн пур юлашкийĕсене те çине тăрса пĕтермелле, халăхсен нушисене тивĕçтерессишĕн тăрăшмалла.

«Действи партийĕ» лидерĕ Альберто Чанка хăйĕн партийĕн представителĕсене Бадольо маршал пуç пулса тăракан правительствăна кĕртме килĕшмесĕр, партин лидерĕн вырăнĕнчен тухнă. Чанка вырăнтан тухнă хыççăн «Действи партийĕн» ячĕпе джунта резолюцийĕшĕн Альберто Калаче сасăланă. Çапла вара джунта решенине пурте пĕр саслăн йышăннă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: пур фронтсенче те патрульсем çапăçнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири чылай объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Югославире çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Фронтăн Срб-Бихач участокне тăшман, хăйĕн пысăк гарнизонĕсене çăлса хăварассишĕн тăрăшса, çĕнĕ чаçсем иле-иле пырать. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Книн секторĕнче Стрица ялĕпе Плавно ялне туртса илнĕ.

Гитлер çарĕсем каллех Мркониç-Град хули патне татса кĕме хăтланнă, анчах вĕсене каялла ывăтса янă, гитлеровецсене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Хĕвелтухăç Боснире вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Пысăк пулăшу пырса çитнĕ пирки, оккупантсен çарĕсем икĕ кун çапăçнă хыççăн Славонири Подравска Слатинăна каллех каялла туртса илнĕ. Çав çапăçусенче тăшман танксемпе тата йывăр артиллерипе усă курнă. Унсăр пуçне тата тăшманăн çапăçури çарĕсене 50 самолет ытла пулăшса тăнă, вĕсем халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсен тылĕсем çине татти-сыпписĕр бомбăсем пăрахса тăнă.

Ликăра тăшман ирĕке кăларнă территори çине Бабин-Поток патне çитиччен кĕрсе кайнă. Анчах та халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем хаяр çапăçусем хыççăн тăшмана каялла малтанхи позицисем çине ывăтса янă. Çав çапăçусенче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсене танксем пулăшса пынă.

РУМЫНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТАМБУЛ, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Румынирен килекен хыпарсем Гитлерла Германин Румынири тарçисем ытларах та ытларах хăрани çинчен, Румыни халăхĕн Германие хирĕçле шухăш-кăмăлĕ ӳссе пыни çинчен тата вăл Антонеску шайккин политики пирки тăрăхни çинчен калаççĕ.

Мартăн 30-мĕшĕнче Бухарестра Румыни пуçлăхĕсене хăратса пăрахнă пĕр ĕç пулса иртнĕ. Ирхине темиçе çĕр çуртăн стенисем çине, гитлеровецсемпе румынсем 1941 çулта Бессарабие туртса илнĕ хыççăн Бухарестри пĕр площадьре лартнă монумент çине те тахăмсем пысăк саспаллисемпе çапла çырса хунă: «Пирĕн çĕршыва нимĕçсене сутнă Антонеску сутăнчăк тĕп пултăр»,—тенĕ. Влаçсем антăранă енне сывлăшран тапăнни çинчен пĕлтернĕ. Халăх убежищĕсенче тăнă вăхăтра вара полицейскисем стенасем çинчен çав сăмахсене çуса тасатнă. Полици хăйĕн çав ĕçне пĕтернĕ хыççăн тин вара тревога пĕтни çинчен пĕлтернĕ. Çак ĕçшĕн Бухарестра темиçе çĕр çынна арестленĕ.

Çĕршывра правительствăна хирĕç пырасси ӳссе пынине темле хытă тыткаласа та пĕтерсе лартма май çуккине курса, влаçсем халăха политикăллă ыйтусене уççăнах сӳтсе-явма пăрахтарма тăрăшаççĕ. Турцире тухакан «Тюркише пост» ятлă гитлерла хаçатăн Бухарестри корреспонденчĕ çапла çырать: Румыни влаçĕсем тĕрлĕ хыпарсем сарăлнине пĕтерсе лартма хăтланни путлăнса ларнă. «Румыни халăхĕн пĕр япала çитмест, — тесе çырать корреспондент: — вăл çавăра хупса ларма пĕлмест. Бухарестра пур çĕрте те—ресторансенче, кафесенче, трамвайсенче, автобуссенче, алăксем çинче —шалтипе тулашри политика ыйтăвĕсем пирки тавлашма чаракан приказсем çаксе тултарнă. Кашни приказрах айăплисене полици аллипе парассипе хăратнă. Апла пулин те çынсем калаçма чарăнмаççĕ». Корреспондент çапла çырать: кинотеатрсенче кашни сеанс умĕн сăвăласа çырнă лозунг кăтартаççĕ. Çав лозунг халăха чĕнмесĕр тăма хушать. Корреспондент çав «стихотворение» илсе кăтартать. Ăна çакăн пек куçарма пулать: «Чĕнес тетĕн пулсан—5 çул тĕрмере ларăн».

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БУХАРЕСТПА ПЛОЕШТИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: паян йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Бухарестпа Плоештие тапăннă.

ВЕНГРИЕ ОККУПАЦИЛЕНĔ ХЫÇÇĂН

СТАМБУЛ, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрин гитлеровецсем лартнă çĕнĕ «правительстви» Германие хирĕç пынă пек туйăнакан çынсене пурне те тискеррĕн тыткалать. Çынна питĕ пĕчĕк сăлтавпах персе е çакса вĕлереççĕ. Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Андреас Церман электромонтера виçĕ кун каялла пĕр «шанчăксăр» çынпа пĕрле калаçса тăнă пирки çеç арестлесе вĕлернĕ. Будапешт таврашĕнчи ялсенче уйрăмах нумай çынна арестленĕ. Гестапо каланă тăрăх, çав вырăнсенче «государство преступникĕсем» нумайăн пытанса пурăнаççĕ.

Венгри столицин кашни урамĕнчех Венгрин çуран тата утлă полицийĕн тата эсэсовецсен патрулĕсем çӳреççĕ. Вĕсене шанчăксăр пек туйăннă кашни çынна тытса чарма, тарма пикенекенсене пăшалпа пеме ирĕк панă. Службăра тăман çынсене телефонпа усă курма чарнă. Венгри влаçĕсем çакна палăртнă: юлашки вăхăтра пулнă событисене пула, армирен салтаксем ытларах тарма пуçланă; çавăнпа çар министрĕ 17 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ мĕнпур арçынсен çар документчĕсене тепĕр хут пырса çыртарма хушса приказ кăларнă.

Венгер ирсĕрĕсем тĕнчери литература классикĕсен произведенийĕсене çунтараççĕ. Венгрире театрсем, киносем, вулав çуртĕсем тата культурăн ытти учрежденийĕсем халĕ те хупă-ха.

ВЕНГЕРСЕН ГЕНЕРАЛĔ ТАРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). АФП агентстви Стокгольмран çапла пĕлтерет: «Нюа даглигт аллеханда» ятлă хаçат çырнă тăрăх, Венгрие нимĕç çарĕсем кĕме тытăнсан, Венгрин генеральнăй штаб сотрудникĕ, генерал Янош Кертес Венгрирен тухса чарнă. Вăл хăйпе пĕрле Венгри укрепленийĕсен планĕсене илсе тарнă.

Венгрин çĕнĕ влаçĕсем Кертес генерал ĕçне хăйсĕрех пăхса тухнă та ăна асаплантарса вĕлермелле тунă.

ЖИРО ГЕНЕРАЛА АРМИ РЕЗЕРВНЕ КУÇАРНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви корреспонденчĕ Алжиртан çапла пĕлтерет: Жиро генерал армин генеральнăй инспекторĕ пулма килĕшмен. Вара Францие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕ ăна, действительнăй службăра хăварса, командованин резервне куçарнă. Çапла вара халĕ Жиро армин генеральнăй штабĕн кадрĕсен пĕрремĕш отделĕн аллинче тăрать.

БАРСЕЛОНРИ ЯРМОРКĂНА ХУТШĂНАСШĂН МАР

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 10-мĕшĕнче Барселонра «Пĕтĕм тĕнчери сутă-илӳ ярмаркки» текенскер уçăлмалла. США-ра тухса тăракан «П. М.» тата «Вашингтон пост» ятлă хаçатсем США-н çав ярмăркăна хутшăнмалла мар тесе çыраççĕ.

АТĂЛ ÇИНЧЕ

Юлашки талăкра Атăл шывĕ 30 сантиметр хутшăннă. Апрелĕн 17-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен, Атăл пăрĕ вакланса юхма пуçланă.

Сывлăшри температура апрелĕн 17-мĕшĕнче ирхине 2 градус сивĕ, шыв температури 0 градус пулнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00096 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ... ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.